27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ОКТЯБРЬ
17
ЫТЛАРИКУН
205(6700) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне МЕРЕЦКОВА Адмирала ГОЛОВКĂНА

КАРЕЛИ фрончĕн çарĕсем нимĕçсен **МУРМАНСК** хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татнă та паян, октябрĕн 15-мĕшĕнче, **ÇУРÇĔР** флочĕн карапĕсемпе десант чаçĕсем пулăшнипе, **ПЕТСАМО (ПЕЧЕНГА)** хулине — паха тинĕс-çар базине тата нимĕçсен чи çурçĕрти оборонин питĕ вăйлă тĕреклетнĕ пунктне туртса илнĕ.

Нимĕçсен оборонине татассишĕн тата **ПЕТСАМО** хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче **ЩЕРБАКОВ** генерал-лейтенантăн, **НИКУЛЬСКИЙ** генерал-майорăн, **СОЛОВЬЕВ** полковникăн, **ЖУКОВ** генерал-майорăн, **АЛЕКСЕЕВ** генерал-майорăн, **ДУДОВЦЕВ** генерал-майорăн, çыхăнри службăн генерал-майорĕн **КУСТОВĂН**, **КАЛИНОВСКИЙ** полковникăн, **ХУДАЛОВ** генерал-майорăн, **КОРОТКОВ** генерал-майорăн, **ПАНИН** генерал-майорăн, **КОЦИЕНКО** полковникăн, **СОПЕНКО** генерал-майорăн, **КАВЕРИН** полковникăн, **ЛЫСЕНКО** полковникăн, **БЛАК** подполковникăн, **АМВРОСОВ** полковникăн, **РОССИЙЧЕНКО** полковникăн, **КРЫЛОВ** полковникăн, **РАССОХИН** полковникăн, **ТИМОФЕЕВ** майорăн, **БАРЧЕНКО** капитанăн çарĕсем; **МИХАЙЛОВ** контр-адмиралăн, **ФОКИН** контрадмиралăн, 1-мĕш рангри капитанăн **КЛЕВЕНСКИН**, 1-мĕш рангри капитанăн **КУЗЬМИНĂН**, 1-мĕш рангри капитанăн **КОЛЫШКИНĂН**, II-мĕш рангри капитанăн **АЛЕКСЕЕВĂН**, III-мĕш рангри капитанăн **ЗЮЗИНĂН**, III-мĕш рангри капитанăн **ФЕДОРОВĂН**, II-мĕш рангри капитанăн **КОРШУНОВИЧĂН** морякĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн **ДЕГТЯРЕВĂН**, артиллери генерал-лейтенанчĕн **ВОЕВОДИНĂН**, артиллери генерал-майорĕн **ПАНИТКИНĂН**, **ХРАМОВ** полковникăн, **НЕБОЖЕНКО** полковникăн, **ГРИГОРЬЕВ** подполковникăн, **СОБОЛЕВ** полковникăн, **СТРОККЕР** подполковникăн артиллерисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн **СОКОЛОВĂН**, авиаци генерал-майорĕн **ПРЕОБРАЖЕНСКИН**, авиаци генерал-майорĕн **НИДАЛИНСКИН**, авиаци генерал-майорĕн **ПЕТРУХИНĂН**, **ЖАТЬКОВ** полковникăн, **МИНАЕВ** полковникăн, **ПУШКАРЕВ** полковникăн, **ЛАРЮЩКИН** полковникăн, **КАЛУГИН** полковникăн, **УДОНИН** полковникăн, **ПОГРЕШАЕВ** полковникăн, **ФИНОГЕНОВ** полковникăн летчикĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн **КОНОНОВĂН**, **СОКОЛОВ** полковникăн, **ЮРЕНКОВ** полковникăн, **АРШЕНЕВСКИЙ** подполковникăн, **ТЕРЕНТЬЕВ** подполковникăн, **СУЧКОВ** подполковникăн, **ТОРЧИЛИН** подполковникăн танкисчĕсем; инженери çарĕсен генерал-лейтенанчĕн **ХРЕНОВĂН**, **ЛЕЙЧИК** полковникăн, **АРШБА** подполковникăн, **ЗАХАРОВ** подполковникăн сапёрĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн **ДОБЫКИНĂН**, **ЕКИМОВ** полковникăн, II-мĕш рангри капитанăн **ПОЛОЗОКĂН**, государство хăрушсăрлăх майорĕн **ГАВРИЛОВĂН** связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă ĕçсенчерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, **ПЕТСАМО (ПЕЧЕНГА)** хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă çар соединенисене тата флот карапĕсемпе чаçĕсене «**ПЕЧЕНГСКИ**» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, октябрĕн 15-мĕшĕнче, 21 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици **МУСКАВ**, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, **КАРЕЛИ** фрончĕн паттăр çарĕсемпе **ÇУРÇĔР** флочĕн карапĕсемпе чаçĕсене, **ПЕТСАМО** хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, карапсемпе чаçсене, **ПЕТСАМО** хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулăшкерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн **ТАВ ТĂВАТĂП**.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи октябрĕн 15-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 14-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Октябрĕн 14-мĕшĕнче пирĕн çарсем РИГА хулинчен кăнтăр-тарахра çапăçса малалла тапăнса пынă, **РАМАСМЕЖС, МЕДЕМИ, БАЛОЖИ, ТЛАСКАНИ, БЛИЯС, КРАМАС ЯУНЗЕМИ, ЦИРУЛИ, БЕРЗУ** ялĕсене тата **БАЛОЖИ** чугун çул станцине туртса илнĕ.

Çурçĕр Трансильванире пирĕн çарсем, Румыни çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, **МАЙЕР, ОЛАХСЭНДЬЕРДЬ, ФЕЛТРА, НЕПОС, НЕМТЬЕ, БЕТЛЕН, УНЕУРАШ, ГЕРЛА, БОРША, МИХЭШТИ** ялĕсене тата **МАЙЕР, ОЛАХСЭНДЬЕРДЬ, ИЛЬВАМИКЭ, ФЕЛДРА, НЕПОС, КОЧ, БЕТЛЕН, ГЕРЛА** чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ.

БЕЛГРАД хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, **КУМОДРАЖ, БЕЛИ-ПОТОК, РИПАНЬ, АРАНДБЕЛОВАЦ, ЧУПРИЯ, ПАРАЧИН, ДЕЛИГРАД, АЛЕКСИНАЦ** ялĕсене туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Октябрĕн 13-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 195 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 56 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ КЛАЙПЕДА (МЕМЕЛЬ) ПОРТНЕ ТАТА НИМĔÇСЕН ТИЛЬЗИТ ХУЛИНЕ ВĔÇСЕ КАЙСА ТАПАННИ

Октябрĕн 14-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Клайпеда (Мемель) портне тата нимĕçсен Тильзит хулине йышлăн вĕçсе кайса тапăннă.

Клайпеда (Мемель) портне тапăннă чухне унта нимĕçсен 9 транспорчĕ тăнă.

Клайпеда (Мемель) хулин çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнче тăшман çарĕсем тата унăн техники нумай пухăнса тăнă пулнă. Бомбăсем пăрахнине пула, 40 тĕлте ытла пушар тухнă. Хĕллехи гавань районĕнче тата портăн вăтаçĕрти пайĕнче, верфь хули районĕнче, суднăсем тăвакан районра тата складсемпе чугун çул узелĕ территорийĕнче уйрăмах вăйлă пушарсем пулнă, пушарсенче взрывсем пулнă. Пушарсен çулăмне пирĕн летчиксем каялла вĕçсе кайнă чухне 200 километртан та курнă.

Тильзит чугун çул станцийĕнче, бомбăсем тÿрех пырса тивнипе, чугун çул çинче тăракан поезд сирпĕнсе кайнă. Неман шывĕ çинчи каçăсем патĕнче, çавăн пекех тата хулан çурçĕр пайĕпе хĕвеланăç пайĕнче вăйлă пушарсем тухнă. Пушарсенче темиçе вăйлă взрыв пулнă.

ОКТЯБРĔН 15-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

КАРЕЛИ фрончĕн çарĕсем нимĕçсен МУРМАНСК хулинчен **çурçĕр-хĕвеланăçнерехри вăйлă çирĕплетнĕ** оборонине татнă та октябрĕн 15-мĕшĕнче, **ÇУРÇĔР флочĕн** карапĕсемпе десант чаçĕсем **пулăшнипе, паха тинĕс-çар базине** тата нимĕçсен чи çурçĕрти оборонин **вăйлă тĕреклетнĕ пунктне** — ПЕТСАМО (ПЕЧЕНГА) хулине **туртса илнĕ, çавăн** пекех тата, тăшманпа çапăçса, **БОЛЬШАЯ ЛИЦА, БОЛЬШАЯ ЗАПАДНАЯ ЛИЦА, ТИТОВКА ОСТРОВ, ТИТОВКА РЕКА, ПОРОВАРА, ЛИНАХАМАРИ, ТИФОНА, ПАРККИНА, НЯСЮККА, КАКУРИ, ЛУОСТАРИ, КОЛТТАКЮЛЯ, ПЕЯТССАМСИЯД, ПИЛЬГУЯРВЕН** ялĕсене йышăннă.

РИГА хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, **БУЛЛИ, БУЛЛЮЦИЕМС, ПРИЕДАЙНЕ, СУЛТЫНИ, ЗОЛИТУДЕ, СКУЛТЕ** ялĕсене тата **БАБИТЕ, ПРИЕДАЙНЕ** чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ.

Çурçĕр Трансильванире пирĕн çарсем, Румыни çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, **ДЕЖ** хулипе чугун çул узелне тата **НЭСЭУД** хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — **ХОРДО, САЛЬВА, ЗАГРА, ИШПАН-МЕЗЭ, ФЕЛЕР, РЕТЕГ, КУЗДРИСАРА, ОКНА-ДЕЖУЛУЙ, ОРМАН, ГИРОЛД, БЫРЛЯ, ВУЛЦУРЕНИ, БЕРИНДУ, УГРУЦУ, ЗИМБОРУЛ-МАРЕ, ПЕТРИНДУ** ятлă пысăк ялсем тата **КИЩРЕБРА, САЛЬВА, НИМИДЖЯ, РЕТЕГ, ОКНА-ДЕЖУЛУЙ** ятлă чугун çул станцийĕсем.

Югослави çĕрĕнче пирĕн çарсем, Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн чаçĕсемпе пĕрле кĕрешсе, **ПОЖАРЕВАЦ** тата **КРУШЕВАЦ** хулисене туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Октябрĕн 14-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 143 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 61 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ НИМĔÇСЕН ТИЛЬЗИТ ХУЛИНЕ, КЛАЙПЕДА (МЕМЕЛЬ) ПОРТНЕ ТАТА ЛЕПАЯ (ЛИБАВА) ПОРТНЕ ТАПАННИ

Октябрĕн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци нимĕçсен Тильзит хулине тапăннă тата тăшманăн Клайпеда (Мемель) порчĕпе Лепая (Либава) портĕнчи транспорчĕпе çар склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Тильзит чугун çул узелĕнче бомбăсем пăрахнине пула пушарсем тухнă, пушарсенче икĕ тĕлте питĕ вăйлă взрыв пулнă. Çавăн пекех тата пушарсем хулан çурçĕр пайĕнче тăшман автотранспорчĕ пухăнса тăнă вырăнта тата Неман шывĕ çинчи каçăсем патĕнче тухнă. Клайпеда (Мемель) портĕнче, бомбăсем пăрахнине пула, 30 тĕлте ытла пушар тухнă. Тапăну пĕтнĕ тĕлелле порта тата хулан хĕвелтухăçпе кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнчи çар объекчĕсене вут хыпса илнĕ. Суднăсем тăвакан верфь районĕнче тата хулан кăнтăр хĕрринче темиçе вăйлă взрыв пулнă.

Лепая (Либава) портне тапăннă чухне унта нимĕçсен 25 транспорт таран тăнă. Бомбăсем пăрахнине пула, темиçе вунă тĕлте пушарсем тухнă. Çĕнĕ порт причалĕсем патĕнче икĕ тинĕс транспорчĕ çуннă. Çавăн пекех тата пушарсем аванпорт причалĕсем патĕнчи транспорт хушшинче пуçланса кайнă. Унсăр пуçне тата аванпортра, бомбăсем тÿрех тивнипе, çар порчĕн каналне кĕмелли вырăнта пĕр транспорт сирпĕнсе кайнă. Вольный порт причалĕсем патĕнчи транспортсем хушшинче те питех вăйлă взрыв пулнă. Чугун çул станцийĕпе краççин склачĕсен территорийĕнче тата тинĕс флочĕн бази районĕнче вăйлă пушарсем тухнă.

Пушарсен çулăмне пирĕн летчиксем унтан 200 километр вĕçсе кайсан та курса пынă.

☆ ☆ ☆

Карели фрончĕн çарĕсем Петсамо хулиенче наступлени пуçласа янă. Нимĕçсем ку районра виçĕ çул хушши укреплениссем тунă, çав укреплениссене вĕсем виçĕ çул хушши пĕр чарăнмасăр вăйлатса пынă. Çÿллĕ вырăнсем çинче тăшман хăватлă опорнăй пунктсем тунă, çак пунктсем патне пымалли вырăнсенче гитлеровецсем тем чухлĕ мина лартса тултарнă тата пралук карса тухнă. Сăртлă вырăн, шурлăхсем тата йышлă кÿлĕсем совет чаçĕсене наступлени тума питĕ кансĕрленĕ. Хаяр çапăçусем хыççăн пирĕн çарсем Карикваййвишь ятлă тăва туртса илнĕ, вăл нимĕçсен оборонин узелĕ пулнă. Вăйлăрах та вăйлăрах пыра-пыра çапса, совет чаçĕсем Титовка шывĕ урлă анлă фронтпа каçса кайнă та тăшман оборонине татнă. Ку оборонăна татнă чухне нимĕçсен икĕ горно-стрелковăй дивизине тата ытти чаçĕсене те аркатса тăкнă. Çитĕнĕве вăйлатса пырса, пирĕн çарсем Петсамо хулинчен Финсен Рованиеми хули патнелле каякан тĕп шоссе çулне татнă. Паян фронт çарĕсем, Çурçĕр флочĕн карапĕсемпе десант чаçĕсем пулăшнипе, Петсамо хулине туртса илнĕ. Петсамо Вуоно фиорчĕн хĕрринчи ялсене нимĕçсенчен тасатнă. Петсамо хулишĕн пынă çапăçусенче нимĕçсен 20-мĕш Лапланди армине йывăр çухатусем кÿнĕ. Нясюкка ялĕ районĕнче нимĕçсен пĕр батальон пехотине пĕтĕм хĕçпăшалĕ-мĕнĕпех тыткăна илнĕ. Трофейсем нумай тытса илнĕ.

Совет авиацийĕ тăшманăн çапăçури речĕсене пыра-пыра çапнă, хамăрăн наступлени тăвакан чаçсене вăйлă пулăшнă. Юлашки пилĕк кун хушшинче пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 66 самолетне персе ÿкернĕ тата аэродромсенче тăшманăн 33 самолетне пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинче пирĕн авиаци 300 автомашинăна çити çĕмĕрсе тăкнă, артиллери батарейисене нумай пусарса лартнă; 7 боеприпас складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Çурçĕр Трансильванире пирĕн çарсем, Румыни çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, Сомешул шывĕпе Сомешул Мик шывĕ пĕрлешнĕ вырăнти районра тăшмана аркатса тăкнă. Çав шывсем çинчи каçăсене тытса илнĕ хыççăн пирĕн çарсем, икĕ енчен те пырса çапса, çулсен паха узелне — Деж хулине туртса илнĕ. Деж хулишĕн çапăçса, нимĕçсемпе венгерсен икĕ батальонне çити пĕтерсе тăкнă. 700 гитлеровеца тыткăна илнĕ, 4 паровоз, 108 вагон тата ытти трофейсем те тытса илнĕ.

* * *

Югослави çĕрĕнче пирĕн çарсем, Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн чаçĕсемпе пĕрле кĕрешсе, нимĕçсен Пожаревац хулинчи гарнизонне çавăрса илнĕ. Тăшманăн унта чылай пысăк вăйсем тăнă, вĕсем темиçе хутчен те ункăран татса тухма хăтланнă. Хаяр çапăçусенче совет чаçĕсемпе Югослави чаçĕсем тăшман гарнизонне пĕтерсе тăкнă та Пожаревац хулине туртса илнĕ. Тепĕр участокра совет çарĕсемпе югослави çарĕсем Кăнтăр Морава шывĕ урлă каçса кайнă та 20 километр таран малалла кайса, Крушевац хулине туртса илнĕ. 300 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 11 тупă, 40 пулемет тата çар хатĕрĕсем тиенĕ 45 лав тытса илнĕ.

* * *

Белоруссири 2-мĕш фронтра Гришенко полковникпа Ермилов подполковник командир пулса ертсе пыракан штурмовик-самолетсем, Максименко майорăн истребителĕсем хÿтĕлесе пынипе, кăнтăрла нимĕçсен Цеханув хули патĕнчи аэродромне тапăннă. Пирĕн летчиксем аэродром тĕлне вĕçсе çитсен, аэродромра тревога пуçласа янă. Совет истребителĕсем тăшманăн зенитнăй артиллерине часах пусарса лартнă. Çав вăхăт хушшинче пирĕн штурмовиксем аэродром çине бомбăсем пăрахнă, унтан çĕр çумне 50 метр çитиччен вĕçсе аннă та тупăсемпе, пулеметсемпе пеме пуçланă. Нимĕçсен стартра тăракан 5 самолетне çунтарса янă. Унсăр пуçне тата 4 самолет бомбăсем тивнипе çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ. Рожан хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре ларакан Славково ялĕ патĕнче пирĕн летчиксем нимĕçсен пысăк боеприпас складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Çурçĕр флочĕн торпедăсем пăрахакан самолечĕсем Баренц тинĕсĕнче нимĕçсен пĕтĕмĕшпе 14.000 тонна таякан икĕ транспортне, пĕр тральщикне тата хурал карапне шыва путарнă.

Хамăрăн обязательствăсене чыслăн пурнăçлар!

Украина колхозникĕсем государствăна тырă памалли плана срокчен тултарассишĕн тата Хĕрлĕ Çар фондне планран иртте́рсе тырă парассишĕн пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту пуçласа яма чĕннине пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем хĕрÿллĕн хапăлласа кĕтсе илчĕç. Çав патриотла чĕнÿ çине пуринчен малтан Шупашкар районĕнчи колхозсем ответлерĕç. Вĕсем Хĕрлĕ Çар фондне планран иртте́рсе 15.000 пăт тырă пачĕç те ĕнтĕ, çывăх кунсенче татах та 17.000 пăт пама пулчĕç.

Октябрĕн 15-мĕшĕнче Мускаври тата республикăри хаçатсенче Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсен обязательствисем пичетленсе тухрĕç.

Çак обязательствăсене пурнăçлассишĕн республика Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕ. Халĕ ĕнтĕ пирĕн республика хăй панă сăмаха мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине пĕтĕм çĕршыв сăнаса тăрать. Мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсен, ялхуçалăх работникĕсен, хатĕрлев органĕсен, партипе совет организацийĕсен хисеплĕ те ответлă задачи — хамăр илнĕ обязательствăсене пĕр пăрка́ланмасăр, тĕрĕс пурнăçласси, хамăрăн орденлă республика чысĕшĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешесси пулать.

Çав обязательствăсене республика тĕрĕс-сипех пурнăçа кĕртме пултарассине шута илсе йышăннă. Вĕсене ăнăçлăн пурнăçлама кашни районрах çителĕклĕ майсем пур. Çав майсемпе усă курма пĕлни тата ĕç хăй тĕллĕн пулса пырассине шанса ларманни кăна кирлĕ. Партипе совет органĕсен, комсомол организацийĕсен, колхозсенчи активистсен колхозсем хушшинчи социализмлă ăмăртăва пуçарса пымалла, государствăна тырă памалли плана срокчен тултарассишĕн тата планран иртте́рсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă парассишĕн пĕтĕм çĕршывра пуçланса кайнă патриотла юхăм халĕ çав тери пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен ялти ĕççыннисене тĕплĕн ăнлантарса памалла.

Тырă парса татмалли сроксем улшăнчине кура тата планран иртте́рсе тырă памалли çĕнĕ обязательствăсем йышăнниче кура, парти райкомĕсемпе райисполкомсен хăйсен ĕçне тĕпренех урăхлатса çĕнетмелле, тырпул хатĕрлес ĕçе ертсе пырассине нумай хут лайăхлатмалла. Авăн çапас ĕçе Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен обязательствисенче кăтартса панă пек вăйлатмалла, кая юлнă колхозсене малта пыраканнисем енчен пулăшассине организацилемелле.

Колхозсене тырпул хатĕрлемелли плана тултарас ĕçре ĕçлĕ пулăшу пама колхозсене каякан партипе совет активĕнчен райком секретарĕсемпе райисполком председателĕсен ытларах ыйтмалла, çав вăхăтрах вĕсен хăйсен те районри кашни колхозăн ĕçне лайăх пĕлсе тăрас пулать. Анчах халĕ çакна палăртма тивет: парти райкомĕсен секретарĕсемпе райисполком председателĕсем пурте мар-ха тырпул хатĕрлес ĕçе кирлĕ пек оперативлăн ертсе пыраççĕ. Сĕнтĕрвăрри райкомĕн руководителĕсем, сăмахран, вĕсен районĕнче пур колхозсем те тырă памалли обязательствăсене тултарнă, МТС авăн çапмалли плана пурнăçламан пирки кăна пĕтĕм район обязательствăсене тултарман пек курăнать, тесе пĕр хутчен мар ĕнтĕ пĕлтереççĕ. Тĕрĕссипе илсен, октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне районри 6 колхоз государствăна 260 центнер тĕштырă парса татман. Единоличниксем 51 центнер парас вырăнне 19 центнер кăна панă. Çавăн пекех колхозсем кивçен илнĕ вăрлăха та пĕтĕмпех тавăрса паман. 365 центнертан пурĕ те 210 центнер кăна тавăрса панă. Кунсăр пуçне, тĕрлĕ организацисемпе учрежденисем государствăна 235 центнер тырă пама тивĕçлĕ. Çавăн пекех çĕршыва подсобнăй хуçалăхсемпе ОРС-сем тырă парса татман. МТС колхозсенче 1147 тонна тырă çапса кăларнă, анчах счетсене вара 700 тоннăшăн кăна панă. Çавăн пек фактсене ĕнтĕ район руководителĕсем тырпул хатĕрлес ĕç çине тĕрĕс мар тата çиелтен пăхнипе кăна ăнлантарса пама пулать.

Районăн тырă памалли планĕ уйрăм колхозсен планĕсенчен тăрать, çавăнпа та ĕнтĕ плана пĕр колхоз кăна тултарман пулсан та, çакă вăл пĕтĕм район планне пурнăçлассине пăсать. Çак кунсенче кая юлнă колхозсем çине пирĕн уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхас пулать. Кая юлнă колхозсене хăвăртрах авăн çапса пĕтерме, хатĕрлев пункчĕсене тырă турттарма пулăшмалла.

Отечественнăй вăрçă пынă мĕнпур тапхăрта Чăваш республикинчи колхозсем государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли хăйсен мĕнпур обязательствисене тÿрĕ кăмăллăн та чыслăн пурнăçласа пычĕç. Халĕ, Отечественнăй вăрçăн татăклă тапхăрĕнче, пирĕн колхозсем государство умĕнчи хăйсен тивĕçне çавăн пекех тÿрĕ кăмăллăн та чыслăн пурнăçлама пултараççĕ, пурнăçламалла та. Государствăн хатĕрлев пункчĕсене планран иртте́рсе Хĕрлĕ Çар фондне паракан тырă кашни кун темиçе вуншар пин пăт килсе тăрать. Анчах октябрĕн 25-мĕшĕччен шутлă кунсем юлчĕç. Савăнла та тырă турттарас ĕçе хăвăртлатмалла!

Государствăна срокчен тырă парса татассишĕн тата планран иртте́рсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă парассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлер!

Великобритани Премьер-Министрĕ У. Черчилль господин тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ А. Иден господин Мускавра пурăнни çинчен

Октябрĕн 14-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин, Великобритани Премьер-Министрĕ У. Черчилль господин, СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Заместителĕ — Совет Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов, Великобританин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ А. Иден господин Пысăк театрта концертра пулнă.

Вăрринчи ложăра тата çаксем пулнă: Британи Посолĕ Арчибальд К. Керр господин, Совет Союзĕн Великобританири Посолĕ Ф. Т. Гусев, США Посолĕ А. Гарриман, Совет Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕсем А. Я. Вышинский, В. Г. Деканозов, С. А. Лозовский, М. М. Литвинов, И. М. Майский, Импери Генеральнăй Штабĕн Начальникĕ А. Брук фельдмаршал, Х. Л. Исмей генерал, Британи Çар Миссийĕн Пуçлăхĕ Баррос генерал-лейтенант, США Çар Миссийĕн Пуçлăхĕ Д. Дин генерал-майор, Мускаври Посольствăсемпе Миссисен пуçлăхĕсем тата вĕсен ертсе пыракан ытти çыннисем, çавăн пекех тата СССР Наркоминделĕн ответлă сотрудникĕсем. Ложăна Великобританин тата Совет Союзĕн ялавĕсемпе илемлетнĕ. Концерт пуçланиччен Пысăк театр оркестрĕ Британин тата Совет Союзĕн государство гимнĕсене каланă.

Театрти халăх И. В. Сталина, У. Черчилль господина, А. Иден господина, В. М. Молотова нумайччен алă çупса ăшшăн саламланă.

СССР Совнаркомĕнче

СССР Наука академийĕн президенчĕ Владимир Леонтьевич Комаров академик 75 çул тултарнине паллă тăвасси çинчен

СССР Наука академийĕн президенчĕ Владимир Леонтьевич Комаров академик 75 çул тултарнине паллă тăвас тесе, СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăннă:

1. СССР Наука академийĕн президиумĕ çапла тума йышăннине ырлас:

а) В. Л. Комаров академикăн биографине тата унăн суйласа илнĕ сочиненийĕсене пичетлесе кăлармалла;

б) СССР Наука академийĕнче В. Л. Комаров ячĕпе 20.000 тенкĕлĕх преми тумалла, ăна кашни çул ботаника тĕлĕшпе çырнă чи лайăх кĕнекесемпе статьясемшĕн памалла.

2. В. Л. Комаров академик ячĕпе стипендисем тăвас:

а) Ленинградри государство университетĕнче, биологи факультетĕнче вĕренекен студентсем-ботаниксем валли — уйăхне 400-шер тенкĕ тÿлемелли 4 стипенди;

б) Мускаври М. В. Ломоносов ячĕпе тăракан государство университетĕнче биологи факультетĕнче вĕренекен студентсем-ботаниксем валли — уйăхне 400-шер тенкĕ тÿлемелли 2 стипенди;

в) СССР Наука академийĕн В. Л. Комаров академик ячĕпе тăракан ботаника институтĕнче аспирант-докторантсем валли — уйăхне 1.300-шер тенкĕ тÿлемелли 2 стипенди.

3. РСФСР Наркомпросне Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче вилнĕ научнăй работниксен ачисем валли Мускавра В. Л. Комаров академик ячĕпе ача çурчĕ уçма хушас.

Мускава Болгари правительствин делегацийĕ килнĕ

Совет Союзĕпе, Великобританипе тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе перемири тăвасси çинчен калаçмашкăн Мускава Болгари правительствин делегацийĕ килнĕ. Делегацире çаксем тăраççĕ: Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Петко Стайнов господин (делегаци председателĕ), портфельсăр министр Добри Терпешев господин, портфельсăр министр Никола Петков господин, финанс министрĕ Петко Стоянов господин. Делегаципе пĕрле çак советниксем килнĕ: профессор Димитрий Михалчев, генерал-полковник Георгий Попов, полковник Иван Антонов, Анна Каменова тата секретарьсем.

Мускав аэродромĕнче делегацие СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн ытти представителĕсем, СССР Оборона Халăх Комиссариатĕнчен Тулашри çыхăнусен отделĕн начальникĕ генерал-майор М. П. Кутузов хирĕç тухса кĕтсе илнĕ.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Вырăнти топливо промышленность управленийĕн предприятийĕсем хушшинче пыракан социализмлă ăмăртăвăн 1944 çулхи сентябрь уйăхĕнчи итогĕсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ топливо промышленность предприятийĕсен вутă хатĕрлесе турттарас тĕлĕшпе пыракан социализмлă ăмăртăвĕн сентябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă. Ăмăртура Шупашкарти вăрманпромхоз (директорĕ Кобяков юлташ, горсовет исполкомĕн председателĕ Аникин юлташ) мала тухнă тесе йышăннă. Вăл сентябрь уйăхĕнчи плана вутă хатĕрлес енĕпе 109 процент, турттарас енĕпе 134 процент тултарнă. Çакна хисепе илсе, Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне Шупашкарти вăрманпромхоза памалла тунă. Унсăр пуçне, ăна ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 20.000 тенкĕ укçа панă.

Ÿкерчĕк çинче: Шупашкарти пир-авăр фабрикинчи стахановка А. Анисимова юлташ. Вăл нормăна 200 процент ытла тултарать.

Коммунистсем — ăмăрту организаторĕсем

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводăн вагонсем тăвакан цехĕнче ĕçлекен коммунистсем, уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, кашниех обязательствăсем илчĕç. Коммунист Антропов ертсе пыракан слесарьсен бригади планран иртте́рсе икĕ вагон юсама, ВКП(б) членĕн кандидачĕ Шашков юлташ ертсе пыракан электросварщиксен бригади ĕç пахалăхне нумай хут ÿстерме сăмах панă. Халĕ вĕсем хăйсен сăмахне пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Шашков юлташ бригади нормăна 154 процент тултарать, унăн бригадинче брак пачах та пулман.

ВКП(б) членĕн кандидачĕ Гаврилов юлташа нумаях пулмасть цех диспетчерĕ пулса ĕçлеме лартнă. Хăйĕн ĕçне вăл кĕске срокрах тĕплĕн вĕренсе çитрĕ. Коммунист Иванов юлташ продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетессишĕн тăрăшать.

Коммунистсем тăрăшнипе пĕтĕм коллектив лайăх ĕçлеме пуçларĕ. Уяв умĕнхи обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçлакансен йышĕ кулленех ÿссе пырать. Коммунист Моняков юлташ ертсе пыракан комплекс коллективĕ, ĕçе тĕрĕс организациленипе, куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялава илме тивĕçлĕ пулчĕ.

ДЕМКИН,
Цехри парторг.

Эпир пӗтӗм ҫӗршыв умӗнче государствӑна тырӑ памалли плана срокчен тултарма, Хӗрлӗ Ҫар фондне 500 пин пӑт тырӑ пама пултӑмӑр

Колхозниксемпе колхозницӑсем! Хамӑрӑн сӑмаха чыслӑн пурнӑҫа кӗртессишӗн кӗрешер!

Ӳкерчӗк ҫинче: Чурачӑк районӗнчи «Новая сила» колхозӑн председателӗ Ф. С. Семенов юлташ. Вӑл ертсе пыракан колхоз государствӑна тырӑ парса татнӑ хыҫҫӑн Хӗрлӗ Ҫар фондне 600 пӑт тырӑ хывнӑ.
Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчӗкӗ.

Малтисемпе танлашмалла

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Хырай Енелӗнчи «Искра» колхозри колхозниксемпе колхозницӑсем Украина колхозникӗсем чӗнсе каланине ӗҫпе ответлеҫҫӗ. Вӗсем, аслӑ уяв умӗнхи социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса, государствӑна тырӑ парса татнӑ, ҫӗрулми кӑларса пӗтернӗ. Выльӑх-чӗрлӗх витисемпе ферма ҫурчӗсене лайӑх юсанӑ, выльӑхсем валли ҫителӗклӗ апат хатӗрленӗ.

Кунта паян-ыран авӑн ҫапса пуҫтараҫҫӗ. Кӗрхи ҫӗртме туса пӗтернӗ. Кӗҫӗн Ҫӗрпӳелӗнчи «Красный Октябрь» колхозра та ӗҫсем лайӑх пыраҫҫӗ. Ҫак колхоз государствӑна тырӑ парса татнӑ, кӗрхи ҫӗртме туса пӗтернӗ. Н. Григорьев колхозник пӗрер гектар вырӑнне куллен 1,20-шер гектар сухаланӑ.

Кипеҫри «Трактор», Тӗвенешри «Комбайн», Нӗркеҫри Шмидт ячӗпе тӑракан колхозсем те ялхуҫалӑх ҫулне пысӑк ӑнӑҫлӑхпа вӗҫлерӗҫ. «Ленинское знамя» колхоз кӑҫал тырӑ памалли плана тултарса, 1945 ҫулшӑн аванс шучӗпе 900 пӑт панӑ.

Анчах пӗтӗм районӗпе илсен, государствӑна тырӑ парасси вара юлса пырать. «Заветы Ильича», Молотов, Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозсем ҫак вӑхӑта ҫитсе те государствӑна тырӑ парса татман. Кунта кӗлтесене те капана хывса пӗтермен. Уйрӑмӑнах «Пролетарий» тата Калинин ячӗпе тӑракан колхозсенче ӗҫ япӑх пырать. Ҫав колхозсенче авӑн ҫапнӑ ҫӗрте тырпула питӗ тӑккалаҫҫӗ, ӗҫ дисциплини япӑх.

Кашни колхозах ВКП(б) райкомӗпе райисполком колхоз председателӗсене пулӑшма хӑйсен уполномоченнӑйӗсене янӑ, анчах та вӗсенчен нумайӗшӗсем ответлӑха туйса ӗҫлемеҫҫӗ. «Пролетарий» колхозра уполномоченнӑй пулса ВКП(б) райкомӗн иккӗмӗш секретарӗ Авакумов юлташ ӗҫленӗ. Вӑл государствӑна тырӑ парас ӗҫе васкатман. Ку ҫеҫ те мар, колхозниксене аванс шучӗпе ытларах тырӑ панине курсан та, вӑл нимӗн те туман. Авӑна питӗ вӑрахӑн ҫапаҫҫӗ. Ҫӗрле авӑн ҫапассине организацилемен. Ҫак кунсенче ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ государствӑна тырӑ парас ӗҫ ҫине ответсӑррӑн пӑхнӑшӑн тата «Пролетарий» колхозра ӗҫе вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи пек организацилеменшӗн Авакумов юлташа, ВКП(б) райкомӗн иккӗмӗш секретарӗн ӗҫӗнчен кӑларса, хытӑ ятласа хӑварчӗ. ВКП(б) Обкомӗн ҫав решенийӗ нумай юлташсене асӑрхаттарать, уполномоченнӑйсем ҫине хунӑ ответлӑха туйса ӗҫлеме хушать.

Октябрь уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса ярса, ҫывӑх вӑхӑтрах авӑн ҫапса, государствӑна тырӑ парса пӗтермелле. Малта пыракан колхозсен ӗҫ опычӗпе юлса пыраканнисене паллаштармалла, колхозсем пӗр-пӗрне пулӑшассине организацилемелле. Халӗ Хӗрлӗ Ҫар фондне тырӑ парас енӗпе уйрӑмах пикенсе ӗҫлемелле. Хамӑр ҫине илнӗ обязательствӑна срокчен пурнӑҫлассишӗн пӗтӗм вӑя хумалла, ҫак ответлӑ ӗҫе пурнӑҫлама мӗнпур колхозниксемпе колхозницӑсене мобилизацилемелле.

Хӗрлӗ Ҫар фондне — тырӑ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, октябрӗн 16-мӗшӗ. (Телефонпа, хамӑр корр.). Украина колхозникӗсем государствӑна тырӑ памалли плана срокчен пурнӑҫа кӗртессишӗн тата планран ирттерсе Хӗрлӗ Ҫар фондне тырӑ парассишӗн социализмлӑ ӑмӑрту сарса яма чӗнсе каланине пур колхозсенче те сӳтсе яваҫҫӗ тата, вӗсен паха пуҫарӑвне ырласа, конкретлӑ обязательствӑсем йышӑнаҫҫӗ. Виҫӗмкун районри 88 колхозра пухусем пулса иртрӗҫ. Нумай колхозсем авӑн ҫапас, кӗрхи ҫӗртме тӑвас ӗҫсене октябрӗн 18—20-мӗшӗ тӗлне пӗтерме пулаҫҫӗ. Районри колхозсем, государствӑна тырӑ парса татса, юлашки икӗ кун хушшинче 30.000 пӑт тырӑ Хӗрлӗ Ҫар фондне ячӗҫ.

Калинин ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем авӑн ҫапас ӗҫе октябрӗн 18-мӗшӗнче пӗтерме йышӑнчӗҫ. Пухура Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ инваличӗ Д. Васильев юлташ сӑмах тухса каларӗ.

—Украина халӑхӗ нимӗҫ фашисчӗсенчен калама ҫук нумай асап тӳсрӗ. Халӗ Совет Украинине фашистсенчен тасатнӑран вара пӗр ҫулталӑк иртрӗ. Украинецсем хӑйсене нимӗҫ пусмӑрӗнчен хӑтарнӑ Хӗрлӗ Ҫара пулӑшас, ҫӗнтерӳ кунне ҫывхартас тесе, 15 миллион пӑт тырӑ Хӗрлӗ Ҫар фондне хывма пулнӑ. Нимӗҫ салтакӗн атти пирӗн ҫӗр ҫине пусман, пирӗн пурлӑхсене фашистсем тустарман, ҫавӑнпа та Хӗрлӗ Ҫара эпир ытларах пулӑшма тивӗҫлӗ. Тырӑ пирӗн ҫаршӑн хӗҫпӑшал пекех кирлӗ. Хӗрлӗ Ҫар фондне 350 пӑт тырӑ пама сӗнетӗп, — терӗ Васильев юлташ. Унӑн сӗнӗвне колхозниксем хапӑл туса йышӑнчӗҫ. Вӑл тырра пӗтӗмпех ӗнер государство складне леҫсе пачӗҫ.

Ванюшкассинчи «Правда» колхозра та пуху пысӑк ҫӗкленӳпе иртрӗ. Пухура ватӑ колхозник Платон Яковлев хӗрӳллӗ сӑмах тухса каларӗ:

— Хӗрлӗ Ҫар чаплӑ ҫӗнтерӳсем тӑвать, хамӑр ҫӗршыва пӗтӗмпе тенӗ пекех тӑшманран тасатрӗ, халӗ Югослави, Венгри ҫӗрӗ ҫинче ҫапӑҫать. Тӑшмана пуҫӗпех ҫапса аркатас вӑхӑт ҫывӑх. Ҫак ҫӗнтерӗве Хӗрлӗ Ҫар тылри колхозниксемпе рабочисем яланах пулӑшса пынипе кӑна тума пултарчӗ. Хӗрлӗ ҫара пулӑшни вӑл — малашне савӑнӑҫлӑ пурнӑҫпа пурӑнассишӗн кӗрешни пулать,—терӗ Яковлев юлташ. Пухӑва пуҫтарӑннӑ колхоз членӗсем, пӗр кӑмӑллӑ пулса, Хӗрлӗ Ҫар фондне 200 пӑт пама кӑмӑл турӗҫ. Ҫак тырра ҫав кунах государствӑна леҫсе пачӗҫ.

Ҫавӑн пекех «Красный пахарь» колхоз 250 пӑт, «Исаково» колхоз 400 пӑт Хӗрлӗ Ҫар фондне пачӗҫ.

С. ШАДИН.

* * *

ҪӖРПӲ, октябрӗн 16-мӗшӗ. (Телефонпа, хамӑр корр.). Районри колхозниксемпе колхозницӑсем Шупашкар районӗнчи колхоз председателӗсем тата Украинӑри колхозниксем государствӑна тырӑ памалли плана срокчен тултарма тата планран ирттерсе Хӗрлӗ Ҫар фондне тырӑ пама чӗннине хӗрӳллӗн ырлаҫҫӗ. Ҫак ыйтӑва сӳтсе явас майпа октябрӗн 15-мӗшӗнче Ҫӗрпӳре ялсоветсемпе колхозсен председателӗсен тата пуҫламӑш парторганизаци секретарӗсен канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлу планран ирттерсе Хӗрлӗ Ҫар фондне 36.000 пӑт тырӑ пама пулчӗ. Халӗ колхозсенче Хӗрлӗ Ҫар фондне тырӑ парас ӗҫ анлӑн сарӑлса пырать. Районри колхозсем октябрӗн 15-мӗшӗнче Хӗрлӗ Ҫар фондне 11.047 пӑт тырӑ леҫсе панӑ.

Малта пыракан колхозсем хӑйсем илнӗ обязательствӑна пурнӑҫларӗҫ те ӗнтӗ. «Нива» колхоз 480 пӑт, «Сталинец» колхоз 480 пӑт пама обязательство илнӗ. Вӗсем ҫак тырра пӗтӗмпех хатӗрлев пунктне леҫсе панӑ. «Малалла» колхоз 1.110 пӑт пама пулса, 900 пӑтне леҫсе панӑ та ӗнтӗ. «Пионер» колхоз 960 пӑт пама шутлать, халӗ 420 пӑтне леҫсе панӑ. «Ильич» колхоз, октябрӗн 16-мӗшӗнче ятарласа хӗрлӗ обоз организацилесе, Хӗрлӗ Ҫар фондне 15 лавпа 300 пӑт тырӑ леҫсе панӑ.

Т. ИВАНОВ.

* * *

ЕЛЧЕК, октябрӗн 16-мӗшӗ. (Телефонпа). Украина колхозникӗсем государствӑна тырӑ памалли плана срокчен пурнӑҫлама, Хӗрлӗ Ҫар фондне планран ирттерсе тырӑ хывма чӗнсе каланине пур колхозсенче те сӳтсе яваҫҫӗ. ВКП(б) Обкомӗпе Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне илнӗ Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз Хӗрлӗ Ҫар фондне планран ирттерсе 2440 пӑт тырӑ парать, вӑл шутран ҫуррине яхӑн хатӗрлев пунктне леҫсе панӑ та ӗнтӗ. Сӑрьелӗнчи «Марс» колхоз 2520 пӑт, «Осоавиахим» колхоз 1520 пӑт, Ленин ячӗпе тӑракан колхоз 2745 пӑт пама йышӑннӑ. Паян Ленин ячӗпе тӑракан колхоз Хӗрлӗ Ҫар фондне валли 1020 пӑт тырӑ тиесе ярать. Колхозсенчен пӗлтернӗ тӑрӑх, Хӗрлӗ Ҫар фондне пӗтӗм районӗпе 35.000 пӑт тырӑ планран ирттерсе пама йышӑннӑ.

* * *

ЧУРАЧӐК, октябрӗн 16-мӗшӗ. (Телефонпа). Хӗрлӗ Ҫар фондне тырӑ парасси районри колхозсенче ӑнӑҫлӑ пырать. Колхозсенчен пӗлтернӗ тӑрӑх, пӗтӗм районӗпе Хӗрлӗ Ҫар фондне 26.000 пӑт пама йышӑннӑ. Чылай колхозсем ҫав тырра хатӗрлев пунктне леҫсе те пӗтереҫҫӗ. Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз 600 пӑт, Янчеллӑри «Новая сила» колхоз 600 пӑт, «Большевик» колхоз 540 пӑт, Сталин ячӗпе тӑракан колхоз 300 пӑт, «Первое мая» колхоз 240 пӑт леҫсе панӑ.

* * *

КАНАШ, октябрӗн 16-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри колхозсем, обязательство тӑрӑх государствӑна тырӑ парса татса, Хӗрлӗ Ҫар фондне тырӑ пама тытӑнчӗҫ. «Красное пламя» колхоз 800 пӑт, «Третья пятилетка» колхоз 550 пӑт, Чкалов ячӗпе тӑракан колхоз 600 пӑт панӑ. Паянхи кун тӗлне районӗпе 5000 пӑт государство складне леҫсе панӑ. Хӗрлӗ Ҫар фондне тырӑ хывма пулса илнӗ обязательствӑсене паян-ыран пур колхозсем те пурнӑҫлаҫҫӗ.

Хӗрлӗ Ҫар фондне аш-какай парас ӗҫе вӑйлатмалла

Колхозниксем ыйтнине кӑмӑлласа, СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ Хӗрлӗ Ҫара валли аш-какай фончӗ тума йышӑннӑ. Пирӗн республикӑри колхозсен ҫав фонда чылай аш-какай памалла.

Етӗрне, Вӑрмар, Сӗнтӗрвӑрри районӗсенче Хӗрлӗ Ҫар фондне аш-какай парасси ӑнӑҫлӑ пырать. Вӗсем октябрӗн 10-мӗшӗ тӗлне плана 70—75 процент тултарнӑ. Ҫӗрпӳ районӗ вара ку тӗлӗшпе те чи малта пырать, вӑл паянхи кун тӗлне плана 94 процент тултарнӑ.

Анчах та республикӑра ҫак ӗҫре кая юлса пыракан районсем те пур-ха. Комсомольски, Шӑмӑршӑ районӗсенчи колхозсем ҫак вӑхӑта ҫитсе те Хӗрлӗ Ҫар фондне аш-какай пӗр килограмм та паман. Первомайски, Чурачӑк, Чкаловски, Вӑрнар, Пӑрачкав районӗсем вара плана 3—6 процент тултарнипе лӑпланса лараҫҫӗ. Республика ку енӗпе плана пурӗ те 38,4 процент кӑна тултарнӑ.

Хӗрлӗ Ҫар фондне аш-какай парас ӗҫ обязательство тӑрӑх, памалли пекех ответлӑ ӗҫ пулса тӑрать, вӗсен условийӗсем те пӗрех. Ҫак ӗҫе кашни районрах вӑйлӑлатмалла. Хатӗрлев Халӑх Комиссариачӗн районсенчи уполномоченнӑйӗсен ку енӗпе ӗҫ мӗнле пынине контроллесе тӑмалла. Кашни колхозӑн ноябрӗн 7-мӗшӗччен Хӗрлӗ Ҫар фондне аш-какай парса татмалла.

А. ДЕМИДОВ.

Ӗҫчен ҫамрӑксем

ОКТЯБРЬСКОЕ. Вӑрманкассинчи «Культура» колхоз ҫамрӑкӗсем, Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи хӑйсен тивӗҫне туйса, колхоз производствинче ырми-канми ӗҫлеҫҫӗ. Г. Стекольщиков пионер 4 уйӑхра 54 ӗҫкунӗ турӗ. Ҫавӑн пекех З. Рыбкинӑпа А. Журавлева пионеркӑсем те 91-шер ӗҫкунӗ турӗҫ.

Ҫамрӑксенчен нумайӗшӗсем тӗрлӗ ӑсталӑха вӗренсе алла илме тӑрӑшаҫҫӗ. 15 ҫулхи В. Иванов тимӗрҫӗ патӗнче вӗренет. Кӑҫал вӑл 249 ӗҫкунӗ тунӑ.

— Манӑн атте фронтра паттӑр вилӗмӗпе вилчӗ. Эпӗ ун вырӑнне тимӗрҫ пулса ӗҫлеме сӑмах паратӑп, — тет вӑл.

Ю. Соловьевӑпа Т. Кудряшова пионерсем пӗр уйӑх хушшинче 55-шер ӗҫкунӗ турӗҫ. Ҫавӑн пекех 13—15 ҫулхи ҫамрӑксем Ф. Киселев, Ф. Железков, И. Овчинников, Н. Васильев, М. Журавлев, В. Егоров юлташсем те колхозӑн тӗрлӗ ӗҫӗсенче 125—200 ӗҫкунӗ тунӑ.

И. АНДРЕЕВ.

Укҫапа япаласен 4-мӗш лотерейи

Отечественнӑй вӑрҫӑ ҫулӗсенче ирттернӗ укҫапа япаласен лотерейисем вӑрҫӑ расхочӗсене витме сахал мар укҫа-тенкӗ парса пулӑшрӗҫ. 1941 ҫулта укҫапа япаласен 1-мӗш лотерейин билечӗсене сарса, государство бюджетне 1 миллиард та 400 миллион тенкӗ, 1942 ҫулта 2-мӗш лотерея билечӗсене сарса 2 миллиард та 100 миллион тенкӗ тата 1943 ҫулта 3-мӗш лотерея билечӗсене сарса 3 миллиард та 700 миллион тенкӗ пухса панӑ.

Пирӗн Чӑваш республикинче те укҫапа япаласен лотерейин билечӗсене сарасси ҫултан ҫулах ӳссе пырать. Ҫапла, укҫапа япаласен 1-мӗш лотерейин билетне 5 миллион та 900 пин тенкӗлӗх сарнӑ пулсан, 2-мӗш лотерея билечӗсене 16 миллион тенкӗлӗх, 3-мӗш лотерея билечӗсене 33 миллион тенкӗлӗх ытла сарнӑ. Республикӑри нумай колхозниксемпе рабочисем лотерея билечӗсене пиншер тенкӗлӗх туянаҫҫӗ. Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Тоскинеево ялҫынни, Отечественнӑй вӑрҫӑ инваличӗ Кузьмин юлташ лотерея билечӗсене 3000 тенкӗлӗх туянса, укҫине ҫийӗнчех хывнӑ. Ҫав районри Ольдикасси ялсоветӗнчи колхозниксем лотерея билечӗсене 100.000 тенкӗлӗх туяннӑ. Укҫапа япаласен виҫҫӗмӗш лотерейин билечӗсене сарасси предприятисемпе учрежденисенче те пысӑк ҫӗкленӳпе иртрӗ. Рабочисемпе служащисем лотерея билечӗсене уйӑхри ӗҫукҫин 15—30 процентӗ чухлӗ туяннӑ.

Укҫапа япаласен виҫҫӗмӗш лотерейин билечӗсене сарас ӗҫе Сӗнтӗрвӑрри, Вӑрмар, Шупашкар, Ишлей, Октябрьски, Канаш районӗсенче ӑнӑҫлӑн ирттернӗ. Асӑннӑ районсенче билетсене сарнипе пӗрлех укҫа пухнӑ. Ҫак ҫитӗнӗве вӗсем ӗҫҫыннисем хушшинче политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе анлӑн сарса пынипе тума пултарнӑ. Анчах та хӑшпӗр районсем лотерея билечӗсене сарас тӗлӗшпе ҫителӗксӗр ӗҫленӗ. Начар ӗҫлекенсен шутне Кувакино, Пӑрачкав, Улатӑр, Шӑмӑршӑ, Элӗк тата Тӑвай районӗсем кӗреҫҫӗ. Вӗсем билет укҫине пухассине кӑҫалхи февраль уйӑхне ҫитиччен тӑсса пынӑ.

Укҫапа япаласен лотерейи ӗҫҫыннисемшӗн те усӑллӑ. Ӗҫҫыннисем лотерея билечӗсем тӑрӑх вылявсем нумай илеҫҫӗ. Укҫапа япаласен виҫҫӗмӗш лотерейи тӑрӑх пурӗ 8 миллион тенкӗлӗх ытла вылявсем тухнӑ. Пирӗн республикӑри ӗҫҫыннисене кӑҫал март уйӑхӗнчен пуҫласа октябрь уйӑхне кӗриччен виҫҫӗмӗш лотерея тӑрӑх кӑна 2 миллион тенкӗлӗх выляв укҫи тӳленӗ. Унсӑр пуҫне нумай ӗҫҫыннисем япаласем выляса илнӗ. Ҫапла, Шупашкар районӗнчи Мӑн Карачура ялҫынни Григорьев, Канаш районӗнчи Шаккӑлри учительница Воронцова юлташсем каракультен ҫӗленӗ пальтосем, Шупашкар районӗнчи Сарапайкасси ялҫынни Константинов, Етӗрне районӗнчи колхозник Алмазов юлташсем тата ытти нумай колхозниксемпе рабочисем ылттӑн тата кӗмӗл сехетсем выляса илнӗ.

Анчах перекет кассисем ӗҫе тивӗҫлипе йӗркелемен пирки, нумай ӗҫҫыннисен билечӗсене тӗрӗслесе тухман-ха. Ку ӗҫе халех кирлӗ пек йӗркелес пулать.

СССР Совнаркомӗ СССР Финанс Халӑх Комиссариатне кӑҫал октябрӗн 25-мӗшӗнче укҫапа япаласен 4-мӗш лотерейине ирттерме ирӗк панӑ. Лотерея билечӗсене пӗтӗмпе 5 миллиард тенкӗлӗх сарма палӑртнӑ. Лотерея билечӗсем 25 тата 50-шар тенкӗлӗх пулаҫҫӗ. 50 тенкӗлӗх билетсем 25-шер тенкӗлӗх икшер билетран тӑраҫҫӗ. Ҫавӑн пек кашни билет ҫине уйрӑм выляв тухма пултарать.

Укҫапа япаласен 4-мӗш лотерейинче 5 миллион выляв пулать, вӗсем пӗр миллиард тенкӗлӗх пулаҫҫӗ. Вылявсем хушшинче укҫан тухакан вылявсем пурӗ 487.900 выляв пулаҫҫӗ, вӗсем 846 миллион та 200 пин тенкӗ чухлӗ пулмалла. Япаласем тухакан вылявсем 125.000 пулаҫҫӗ. Вӗсем 153 миллион та 800 пин тенкӗлӗх шутланаҫҫӗ. Укҫан тухакан вылявсем хушшинче 400 выляв 50.000 тенкӗлӗххисем, 2500 выляв 25.000 тенкӗлӗххисем, 8.000 выляв 10.000 тенкӗлӗххисем, 18.000 выляв 5.000 тенкӗлӗххисем, 35.000 выляв 1000 тенкӗлӗххисем, 194.000 выляв 500 тенкӗлӗххисем, 4.617.000 выляв 100 тенкӗлӗххисем. Япаласем тухакан вылявсен хисепӗнче каракультен ҫӗленӗ 500 хӗрарӑм пальтовӗ, ҫӑм-пусмаран ҫӗленӗ 600 хӗрарӑм пальтовӗ, 2000 ылттӑн сехет, ҫӑм-пусма тавартан ҫӗленӗ, каракуль воротниклӗ 2000 хӗрарӑм пальтовӗ, хӗлле тӑхӑнмалли каракуль воротниклӗ 2000 арҫын пальтовӗ, ҫӑм-пусмаран ҫӗленӗ 2000 арҫын костюмӗ, ҫӑм пусмаран ҫӗленӗ 4000 хӗрарӑм костюмӗ, 2000 кӗмӗл сехет тата коверсем, атӑ-пушмаксем, костюмсем ҫӗлемелли таварсем тата ыттисем те пур.

Вылявсен тиражӗ 1945 ҫулти мартӑн 15-мӗшӗнче пулать. Лотерея билечӗсене тытакансем, выляв тухсан, ӑна хӑйсен ирӗкӗпе укҫан е япаласем илме пултараҫҫӗ.

Кӑҫал октябрӗн 25-мӗшӗнчен пуҫласа лотерея билечӗсене пур предприятисемпе учрежденисенче те, колхозсенче те тата перекет кассисенче те туянма пулать. Предприятисемпе учрежденисенче тата колхозсенче лотерея билечӗсене государство кредичӗпе перекет кассисене пулӑшакан комиссисен уполномоченнӑйӗсем сараҫҫӗ. Кашни уполномоченнӑй билет туянма шутлакан ҫынсен списокне тӑвать те унта билетсем миҫе тенкӗлӗх илнине ҫырса ӑна алӑ пустарать. Предприятисемпе учрежденисен бухгалтерӗсем билет илекенсенчен укҫа йышӑнаҫҫӗ. Колхозниксем билет укҫине ҫийӗнчех е темиҫе срокра тӳлеҫҫӗ.

Укҫапа япаласен виҫҫӗмӗш лотерейин билечӗсемшӗн укҫа пухас тата лотерея билечӗсене салатса парас ӗҫе пӗтӗмпех 1945 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗ тӗлне вӗҫлемелле.

Укҫапа япаласен лотерейин билечӗсене сарасси кӗске вӑхӑтрах пурнӑҫа кӗртмелли ответлӑ ӗҫ пулса тӑрать. Ҫак ӗҫе ӑнӑҫлӑн ирттерес тесен, ӗҫҫыннисем хушшинче массӑллӑ ӗҫе анлӑн сарса пыни кирлӗ. Финанс работникӗсен лотерея билечӗсене сарас ӗҫе лайӑх ирттерме хатӗр пулмалла.

А. МИХАЙЛОВ.
Перекет кассисен тата государство кредичӗн Чӑваш республикинчи Управленийӗн начальникӗ.

СССР НАУКӐСЕН АКАДЕМИЙӖН ПӖРЛЕШӲЛЛӖ ПУХӐВӖ

Академи президентне В. Л. Комарова чыслани

Мускаври ученӑйсен ҫуртӗнче октябрӗн 14-мӗшӗнче Наукӑсен Академийӗн пухӑвӗ уҫӑлнӑ. Ҫав пуху СССР Наукӑсен Академийӗн президенчӗ В. Л. Комаров ҫуралнӑранпа 75 ҫул тултарнине тата вӑл наукӑпа общество тата педагогика ӗҫӗнче 50 ҫул ӗҫленине чысласа чаплӑ лару пулса иртнипе пуҫланнӑ.

Пухӑва наукӑн пысӑк деятелӗсем—академиксем, Академин член-корреспонденчӗсем, профессорсем, ӑслӑлӑх институчӗсемпе лабораторисен руководителӗсем, совет общественноҫӗн представителӗсем пухӑннӑ.

Малтанхи сӑмаха СССР Наукӑсен академийӗн вице-президенчӗ А. А. Байков каланӑ.

— Эпир,—тенӗ вӑл, — Наукӑсен Академийӗн кӑҫалхи сессине историри чаплӑ самантра, ҫӗнтерӳллӗ Хӗрлӗ Ҫар пирӗн союзниксен ҫарӗсемпе пӗрле тӑшмана таткалӑн пыра-пыра ҫапнӑ самантра тата фашистсен шӑтӑкӗ тавра вилӗм унки хӗсӗнсе пынӑ самантра пуҫтарӑнтӑмӑр. Ҫав ҫӗнтерӳсемпе хавхаланса, фашизма ҫапса аркатас ӗҫре Совет Союзӗ улӑпла пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнипе мухтанса, эпир пӗтӗм чунчӗререн хамӑр ҫулпуҫӑмӑр, учителӗмӗрпе тусӑмӑр Сталин юлташӑмӑр ҫине савӑрӑнса пӑхатпӑр. Вӑл малтан пуҫласах Германи пур-пӗрех поражени тӳсесси ҫинчен каларӗ, вӑл пирӗн халӑхӑн тӗрӗслӗхшӗн пыракан кӗрешӗвне пуҫарса пырать.

Оратор Совет Союзӗн Маршалне аслӑ Сталина мухтавласа ырӑ сунать, пухурисем пурте ҫакна тӑвӑллӑн алӑ ҫупса кӗтсе илеҫҫӗ.

Мӗнпур наука деятелӗсен ячӗпе, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе Байков академик В. Л. Комарова хӗрӳллӗн саламлать тата хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ырлӑхӗшӗн, ӑна малалла чечеклентерсе пырассишӗн нумай ҫул хушши пултаруллӑн ӗҫлеме ырӑ сунать.

СССР Наукӑсен Академийӗн секретарӗ Н. Г. Бруевич академик СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн В. Л. Комарова Социализмлӑ Ӗҫ Геройӗн званине парасси ҫинчен йышӑннӑ Указне, ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ юбиляр патне янӑ салама тата Совнарком В. Л. Комаров академик 75 ҫул тултарнине палӑртасси ҫинчен йышӑннӑ постановление вуласа парать.

Мускаври ӗҫҫыннисен ячӗпе В. Л. Комарова Ӗҫҫынни депутачӗсен Мускав хула Совет Исполкомӗн Председателӗ В. П. Пронин юлташ саламлать. Вӑл юбиляра «Мускава хӳтӗленӗшӗн» ятлӑ медаль парать.

Унтан Владимир Леонтьевич Комаров тата Наукӑсен Академийӗ ҫинчен доклад тума Л. А. Орбели академика сӑмах параҫҫӗ. Вӑл Комаровӑн гимназире вӗреннинченех пуҫласа хальхи вӑхӑта ҫитиччен чаплӑ пурнӑҫ ҫулне ҫутатса парать. Комаровӑн пурнӑҫӗпе ӗҫӗ — пире Сталин юлташ наукӑпа халӑхшӑн мӗнле ӗҫлеме кирли ҫинчен вӗрентнине пӗтӗм вӑя хурса пурнӑҫа кӗртсе пынин тӗслӗхӗ пулса тӑрать.

Трибуна умне ҫӗршыври чи пысӑк ученӑйсем пӗрин хыҫҫӑн тепри тухаҫҫӗ, вӗсем юбиляра ҫӗршыври наукӑпа общество организацийӗсен ячӗпе саламлаҫҫӗ. П. Л. Капица академик Лондонри Королевски общество, Вашингтонри Нацилӗ Академи, французсен Парижри Наукӑсен Академийӗ тата Индири Нацилӗ Академи янӑ саламсене вуласа парать.

Сӑмах юбиляра параҫҫӗ. В. Л. Комаров хӑйне юбилей ячӗпе саламланӑ ҫынсемпе организацисене пурне те ӑшшӑн тав тӑвать. Ученӑй хӑй пурнӑҫ ҫулӗн тӗп тапхӑрӗсене, хӑйӗн ӑслӑлӑх ӗҫӗ пуҫланнӑ чухнехи йывӑрлӑхсене ҫӗнтерсе пынине аса илет. Хӑй Академире ӗҫлени ҫинчен каласа, вӑл Сталин юлташ наукӑна малалла аталантарассишӗн, наука ҫыннисемшӗн ҫав тери тимлӗн тӑрӑшнине Академи ӗҫӗнче куллен туйса тӑнине палӑртать. Юлашкинчен Президент ҫамрӑк ученӑйсене, пирӗн ҫӗршыври мӗнпур ученӑйсене халӑхшӑн, Тӑван ҫӗршывшӑн татах та пултаруллӑнрах ӗҫлеме, наука ӗҫӗнче ывӑнма пӗлмесӗр хӑюллӑн малалла пыма чӗнет.

Сталин юлташ патне яма ҫырнӑ салама мӗнпур зал тӑвӑллӑн алӑ ҫупса йышӑнать. Ӑна С. И. Вавилов академик вуласа парать. Ҫавӑн пекех пуху Молотов юлташ патне тата пирӗн геройла Хӗрлӗ Ҫар патне яма ҫырнӑ саламсене те хавхаланса йышӑнать.

Наукӑсен Академийӗн пӗрлешӳллӗ пухӑвӗ темиҫе куна пырать. (ТАСС).

Выигрышсен икӗ вылявӗ

Октябрӗн 15-мӗшӗнче Мускавра выигрышсен икӗ выпявӗ пулса иртнӗ: Иккӗмӗш Пятилетка заемӗн (тӑваттӑмӗш ҫулхи кӑларӑмӗн) 33-мӗш выпявӗ тата СССР Оборонине тӗреклетмелли заемӑн 28-мӗш выпявӗ.

Иккӗмӗш Пятилетка заемӗн (тӑваттӑмӗш ҫулхи кӑларӑмӗ) вылявӗнче 7.800 пин выигрыш вылянӑ, вӗсем 293.420 пин тенкӗлӗх пулнӑ. 3.000 тенкӗлӗх выигрыш заемӑн выляса илекен кӑларӑмӗн пур 200 разрядӗнче те 16.473-мӗш номерлӗ серири 5-мӗш номерлӗ облигаци ҫине ӳкнӗ.

СССР Оборонине тӗреклетмелли заемӑн вылявӗнче 410.750 выигрыш выляннӑ, вӗсем 67.812.800 тенкӗлӗх пулнӑ. 3.000 тенкӗлӗх выигрыш заемӑн выляса илекен кӑларӑмӗн пур 53 разрядӗнче те 33.362-мӗш номерлӗ серири 49-мӗш номерлӗ облигаци ҫине ӳкнӗ. (ТАСС).

Хӗвеланӑҫ Европӑри вӑрҫӑ ӗҫӗсем

ЛОНДОН, октябрӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллӗ вӑйӗсен верховнӑй командованийӗн штабӗ паян пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре ҫапла каланӑ:

Леопольд каналӗнчен ҫурҫӗртерехре союзниксен ҫарӗсем Биерле районӗнчен кӑнтӑртарахра пӑртак малалла куҫнӑ. Канал хӗррингчи укрепление кӑшт аслӑлатнӑ. Зейд-Бевеланд ҫурутравӗн ансӑр пайӗнче тӑшман питӗ вӑйлӑ контратакӑсем тӑвать. Гертогенбошран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре союзниксен ҫарӗсем савӑлланса кӗнӗ районра тӑшманӑн контратакисене сирсе янӑ.

Союзниксен ҫарӗсем Оверлоон хулинчен пӗр 1.500 ярд кӑнтӑралла куҫнӑ, вӗсем ҫӳреме йывӑр вӑрманлӑ вырӑнпа пынӑ. Унта тӑшман вӑйлӑ хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе пынӑ.

Союзниксен ҫарӗсем Аахен хулин ҫурҫур пайӗнче майӗпен малалла куҫса пыраҫҫӗ, унта кашни ҫуртшӑнах ҫапӑҫаҫҫӗ.

Аахен хулинчен ҫурҫӗртерехре, Барденберг районӗнче, нимӗҫсем, танксем пулӑшнипе, вӑйлӑрах хӗсме пуҫланӑ, анчах та вӗсен темиҫе контратакине союзниксен самолечӗсемпе артиллерийӗ сирсе янӑ.

Союзниксен авиацийӗ Кобленц хулинчен хӗвеланӑҫнерехре Майенри тата Эйскирхенри кӗперсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Истребитель-бомбардировщиксем Хӗвеланӑҫ Германин тӗрлӗ вырӑнӗсенчи чугун ҫул объекчӗсене атакӑланӑ.

ЛОНДОН, октябрӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен Вӑтаҫӗр тинӗс таврашӗнчи хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен штабӗ паян пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре ҫапла каланӑ: 5-мӗш арми фрончӗн участокӗнче вӑйлӑ ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ.

Римини хулипе Болонья хули хушшинчи ҫултан ҫурҫӗртерехре 8-мӗш арми чаҫӗсем тӑшманӑн хыҫалти чаҫӗсене хӑваласа янӑ, вӗсем хальь фронтӑн анлӑ участокӗнче нимӗҫсемпе ҫапӑҫаҫҫӗ.

Корфу утравӗ ҫинче нимӗҫ чаҫӗсен юлашкийӗсем тыткӑна паранна.

Йывӑр бомбардировщиксен питӗ пысӑк соединенийӗсем, истребительсем хӳтӗлесе пынипе, ӗнер Германири синтетически горючи завочӗсене тата ҫурҫӗр Италири, Австрири, Венгрири сортировка станцийӗсене тапӑннӑ.

Союзниксен Вӑтаҫӗр тинӗс таврашӗнчи авиацийӗ 2.500 вӗҫеве яхӑн тунӑ.

* * *

ЛОНДОН, октябрӗн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллӗ вӑйӗсен верховнӑй командованийӗн штабӗ паян пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре ҫапла каланӑ:

Октябрӗн 14-мӗшӗнче союзниксен ҫарӗсем Леопольд каналӗ урлӑ тата тепӗр тӗлте — Ваттерфлит ҫывӑхӗнче каҫса кайнӑ. Савойя Аргс-Плаат хулинчен кӑнтӑртарахра союзниксем Биерфлит хулинчен кӑнтӑралла наступлени туса пыракан чаҫсем патнелле кайнӑ.

Оверлоон хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре союзниксен ҫарӗсем темиҫе миля сарлакӗш фронтпа 1000 ярд малалла кайнӑ. Унта тӑшман калама ҫук вӑйлӑ хирӗҫ тӑрать. Аахен хулин ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫ хӗрринче союзниксем пӗртак малалла кайнӑ, урамсенче питӗ вӑйлӑ ҫапӑҫаҫҫӗ. Гюртген тата Ле-Тилло хулисен районӗсенче союзниксен ҫарӗсем, тӑшман калама ҫук хытӑ хирӗҫ тӑрать пулин те, малалла куҫса пыраҫҫӗ.

ЛОНДОН, октябрӗн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Союзниксен Вӑтаҫӗр тинӗс таврашӗнчи хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен штабӗ паян пичетлесе кӑларнӑ пӗлтерӳре ҫапла каланӑ: октябрӗн 14-мӗшӗнче 5-мӗш армин чаҫӗсем Италири фронтӑн вӑтаҫӗрти участокӗнче йывӑррӑн ҫапӑҫнӑ, тӗллӗн-тӗллӗн ӑнӑҫусем тунӑ. 8-мӗш армин Англипе Инди чаҫӗсем Болонья хулипе Римини хули хушшинчи ҫултан кӑнтӑртарахри тулла вырӑнта пӗртак малалла кайнӑ.

Англин пысӑках мар мина тральщикӗсем, йывӑр та хӑрушӑ условисенче ӗҫлесе, Далмацин кӑнтӑр утравӗсем ҫинчи каналсене тасатса ҫитернӗ, вӗсем унта союзниксен ҫарӗсене чылай нумай пулӑшнӑ.

Союзниксен авиацийӗ тӑшманӑн Германири, Венгрири тата Югославири вӑрҫӑ объекчӗсене атакӑланӑ.

Союзниксен авиацийӗ Германие тапӑнни

ЛОНДОН, октябрӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Лондонра официальнӑй йӗркепе ҫапла пӗлтернӗ: американецсен пӗр пин ытла йывӑр бомбардировщикӗ Кельн хулинчи чугун ҫулпа ытти объектсене тапӑннӑ. «Вӗҫекен крепость» тата «Либерейтор» йышши самолетсем, истребительсен пысӑк соединенийӗсем хӳтӗлесе пынипе, Саарбрюккен тата Кайзерслаутерн хулисенчи вӑрҫӑ объекчӗсемпе промышленность объекчӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ.

ЛОНДОН, октябрӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Лондонра официальнӑй йӗркепе ҫапла пӗлтернӗ: акӑлчансен 1000 йывӑр бомбардировщикӗ Дуисбург хулинчи чугун ҫул объекчӗсене, шалти порта тата промышленность предприятийӗсене тапӑннӑ. Хула ҫине 4.500 тонна фугаслӑ тата вут тивертекен бомбӑсем пӑрахнӑ. Малтанхи даннӑйсем тӑрӑх, бомбӑсем питӗ пысӑк сиен кӳнӗ.

ЛОНДОН, октябрӗн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, октябрӗн 15-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле Англи самолечӗсен пысӑк соединенийӗсем каллех Германие тапӑннӑ. Дуисбург тата Брауншвейг хулисем ҫине уйрӑмах нумай бомбӑсем пӑрахнӑ. Дуисбург хулине атакӑланӑ самолетсен экипажӗсем Дуисбург хулинче ун умӗн тапӑннӑ чухне тухнӑ пушарсем те сӳнменни ҫинчен пӗлтереҫҫӗ. Англи авиацийӗ тата Берлинпа Гамбург хулисем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ.

Венгрири лару-тӑру

ЧЕРНОВИЦЫ, октябрӗн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Паян Бухарестри радио пӗлтернӗ хыпарсем Венгрире политика тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем пулнине кӑтартаҫҫӗ.

Венгри регенчӗ (правителӗ) Хорти кӑнтӑрла иртсен радиопа сӑмах тухса каланӑ. Вӑл — Венгри перемири тӑвасси ҫинчен калаҫма пуҫласшӑн, тенӗ.

Пӑртак тӑрсан, радиопа Хорти регентӑн ывӑлӗ ҫухални ҫинчен Венгрин шалти ӗҫсен министрӗ пӗлтернине панӑ. Министерство Венгрин вырӑнти влаҫӗсене тата полицие ҫӗршыв чикки урлӑ тӗрӗслемесӗр пӗр автомашинӑна та кӑларса яма хушман, пур автомашинӑсене те, вӗсен хуҫи кам иккенне пӑхмасӑрах, лайӑх тӗрӗслеме хушнӑ.

Унтан радиопа Венгрин генеральнӑй штабӗн начальникӗ Вереш генерал кӑларнӑ приказа вуласа панӑ. Приказра ҫапла каланӑ: Хорти регент каланине вӑрҫӑ ӗҫӗсем пӗтнӗ пек ӑнланмалла мар, тенӗ. «Хальхи вӑхӑтра перемири тӑвас пирки калаҫасси ҫинчен ҫеҫ сӑмах пырать,—тенӗ приказра. — Ҫав калаҫусем мӗнпе пӗтесси паллӑ мар-ха, ҫавӑнпа та Венгри чаҫӗсемпе соединенисен пурин те кирек кам тапӑннине те хирӗҫ тӑмалла»,—тенӗ.

Ҫурҫӗр ҫитеспе Будапештри радио Венгри фашисчӗсен пуҫлӑхӗ Ференц Салаши каланӑ сӑмахна панӑ. Ҫав сӑмахран ҫакӑ курӑнать: Венгрире хальь шалти вӑйсем пӗр-пӗринпе кӗрешеҫҫӗ, радиостанци гитлеровецсен аллинче тӑрать-ха. Салаши Хортине—вӑл «Венгрин союзникне сутнӑ», тесе айӑпланӑ. Венгри малашне те Гитлер Германийӗ майлӑ пулса ҫапӑҫӗ, тенӗ. Салаши хӑйне радиопа итлекен ҫынсене хӑйӗн приказӗсене пӑхӑнма хушнӑ.

АВСТРИРЕ ГИТЛЕРА ХИРӖҪ ДЕМОНСТРАЦИСЕМ ПУЛСА ИРТНӖ

ЛОНДОН, октябрӗн 15-мӗшӗ. (ТАСС). «Дейли телеграф энд Морнинг пост» хаҫат ҫапла пӗлтерет: Австрирен килнӗ хыпарсем каланӑ тӑрӑх, Венӑра тата Штири провинцийӗнче Гитлера хирӗҫ демонстрацисем пулса иртнӗ. Нимӗҫсем нумай ҫынна тытса хупнӑ. Нимӗҫсем, Венӑри халӑх хумханма пӑрахмасан, Вена ҫине бомбӑсем пӑрахассипе хӑратаҫҫӗ.

РУРПА РЕЙН ОБЛАҪӖНЧЕ ҪЫНСЕМ ХӐРАСА ӲКНИ ТАТА ХУМХАННИ

ЛОНДОН, октябрӗн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Стокгольмран Рурпа Рейн облаҫӗнчи промышленность районӗсенче ҫынсем хумханни ҫинчен хыпарсем килнӗ. Дюссельдорфра, Кельнра тата Саарбрюккенра ҫынсем хӑраса ӳкни тата хумханни Германири ытти хуласене те сарӑлнӑ. Ҫав хуласенчен темиҫешер пин ҫын, бомбӑсем пӑрахнинчен хӑтӑлма шутласа, Германин шалти облаҫӗсене тараҫҫӗ. Гитлерла влаҫсем хытӑ чараҫҫӗ пулин те, ҫынсем тарасси ӳссех пырать. Нимӗҫсем пӑшӑрханни тата ҫитес вырлӑхран хӑранинчен те килет. Нимӗҫсем оккупациленӗ ҫӗрсенче ҫаратса пухнӑ апатсимӗҫе илсе пыма пӑрахнӑ пирки, апат-ҫимӗҫ тӗлӗшпе пурнӑҫ сасартӑк питӗ йывӑрланнӑ. Ҫӗрулми сахал кӑларни ҫинчен тата ытти культурӑсем те сахал тухни ҫинчен калакан хыпарсем халӑха тата ытларах хӑратаҫҫӗ.

Францири мобилизаци

ЛОНДОН, октябрӗн 14-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви Парижри радио пӗлтернине парать. Ҫав пӗлтерӳре Францире 18 ҫултан пуҫласа 47 ҫула ҫитнисене пурне те ҫара илме пуҫлани ҫинчен каланӑ.

КӖСКЕН

Англи Австралире пӗтӗм ытлашши какая тата сӗт продукчӗсене судӑн илсе хунӑ. Ҫак тӗлӗшпе тунӑ договор тӑватӑ ҫуллӑха пырать.

РУМЫНИРЕ ВӐРҪӐ ПРЕСТУПНИКӖСЕНЕ ТЫТСА ХУПАҪҪӖ

БУХАРЕСТ, октябрӗн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Кунти хаҫатсем пурте Румыни влаҫӗсем вӑрҫӑ преступникӗсене тытса хупма пуҫлани ҫинчен пӗлтереҫҫӗ. «Тимпул» хаҫат ҫапла ҫырать: Румыние Гитлер Германийӗ майлӑ пулса Совет Союзне хирӗҫ вӑрҫтарнӑшӑн айӑплӑ пулса тӑракан ҫынсене тытса хупма хушакан декрет тӑрӑх, айӑплисене халь тытса хупма пуҫларӗҫ. Ҫав декрет тӑрӑх, 1940 ҫултан пуҫласа 1944 ҫулхи августӑн 23-мӗшӗччен влаҫра тӑнӑ пур правительство членӗсене те тытса хупмалла.

Халӗ министр пулнӑ 7 ҫынпа вӗсен заместителӗсене, ҫавӑн пекех тата Украинӑн оккупациленӗ территорийӗн («Транснистри» тесе ят панӑскерӗн) губернаторӗ пулса ӗҫленӗ Алексиануна тата Одессӑна оккупациленӗ вӑхӑтра Румыни влаҫӗсен пуҫӗнче тӑнӑ Герман Пынтяна тытса хупнӑ. Ҫавӑн пекех тата наци экономики министрӗ пулнӑ Потопяну генерала отставкӑна тухнӑ хыҫҫӑн тытса хупни ҫинчен пӗлтереҫҫӗ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Перекет кассинчи выляса илекен вкладсем

ОКТЯБРӖН 10-мӗшӗнче ШУПАШКАРТА ПУЛСА ИРТНӖ ВЫИГРЫШСЕН 4-мӗш ВЫЛЯВӖН ОФИЦИАЛЬНӐЙ ТАБЛИЦИ

Выигрышсем Чӑваш республикинчи мӗнпур перекет кассисенчи выляса илекен вкладсен ҫак номерлӗ счечӗсем ҫине ӳкнӗ:

Счетсен номерӗсем	Вкладсен вӑтам суммин ҫакӑн пек процентӗ чухлӗ выляса илнӗ
01	50 проц.
46	50 проц.
80	50 проц.
121	50 проц.
168	50 проц.
235	50 проц.
261	100 проц.
286	200 проц.
324	50 проц.
364	50 проц.
439	50 проц.
475	50 проц.
499	50 проц.
536	100 проц.
569	50 проц.
638	50 проц.
670	50 проц.
681	50 проц.
734	50 проц.
786	50 проц.
825	50 проц.
864	50 проц.
911	50 проц.
942	50 проц.
973	50 проц.

Счетсем 1.000-рен ытла выртакан перекет кассисенче кашни пинре пӗррелӗш пинри счетсен номерӗсемех выляса илнӗ, урӑхла каласан 1.001-мӗш, 2.001-мӗш, 3.001-мӗш тата ытти ҫавӑн пек номерлӗ счетсем выляса илнӗ.

Тираж Комиссийӗн Председателӗ БУГАЕВ.
Тираж Комиссийӗн Председатель заместителӗ САМОЙЛОВА.
Государство кредичӗпе перекет кассисене пулӑшакан Комиссин председателӗ СЕРОВА.
Комисси ответлӑ секретарӗ БУДНИКОВ.

Шупашкарти уйрӑм ҫынсене тумтир ҫӗлесе паракан мастерскоя ҫӗвӗҫсем кирлӗ. Ҫак адреспа ыйтса пӗлмелле: гор. Чебоксары, Чувашская, 6.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, заместительпе секретарӗн — 4—26, парти пурнӑҫ пайӗн 3—99, промышленноҫпа ялхуҫалӑх пайӗсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00745 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 18.000 экз.